Ĕç тăвакан уголовлă инспекцинче

# Çĕнĕлĕх – ирĕклĕхе чакарасси

***2009 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнче йышăннă 377 № Федераллă саккунпа кăçалхи январĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа Раççей Федерацийĕн Уголовнăй тата Уголовлă пурнăçлав кодексĕсенче ирĕклĕхе чакарасси çинчен калакан положенисем вăя кĕчĕç.***

***Çак çĕнĕлĕхе ăнлантарса пама эпир районсем хушшинчи Муркашри 11 № ĕç тăвакан уголовлă инспекци пуçлăхне Владимир Валерьевич КОЖЕВНИКОВА ыйтрăмăр:***

– Ирĕклĕхе чакарасси – Раççей çĕршывĕшĕн наказанин çĕнĕ тĕсĕ шутланать, ирĕкрен хăтарнин альтернативлă енĕ. Килтен (хваттертен, урăх çурт-йĕртен) талăкăн палăртнă вăхăтĕнче кайма юрамасть, палăртнă вырăнсене (çĕрлехи клубсене, ташă каçĕсене, эрех-сăра ĕçме ирĕк паракан ытти заведенисене) çӳремелле мар, пĕр-пĕр муниципаллă тытăмăн территорийĕнчен тухса кайма юрамасть, масăллă мероприятисене хутшăнма тата вĕсенче пулма юрамасть, пурăнакан вырăна, ĕç вырăнне е вĕренӳ вырăнне ĕç тăвакан уголовлă инспекци килĕшмесĕр улăштарма юрамасть. Суд айпланă çынна асăннă чарулăхсене çирĕплетсе пачĕ пулсан, наказани ирĕклĕхе чакарнипе танлашать. Çакăнпа пĕрлех суд айпланă çынна ĕç тăвакан уголовлă инспекцие кашни уйăхрах 1-4 хутчен пырса регистрациленме яваплăх тыттарать. Суд çӳлерех асăннă чарулăхсенчен кирек хăшне те çирĕплетсе пама пултарать.

**– Пур айăпланă çынна пырса тивекен обязательнăй чарулăхсем пур-и?**

– Пур. Ку вăл ĕç тăвакан уголовлă инспекципе калаçса татăлмасăр пурăнмалли вырăна улăштарма тата муниципаллă тытăмăн территорийĕнчен тухса кайма ирĕк çукки.

**– Ирĕклĕхе чакарни наказанин тĕп енĕ шутланать е çук?**

– Тĕп ен те, хушма ен те пулма пултарать. Тĕп ен пулсан – икĕ уйăхран пуçласа тăватă çул таран. Çакă йывăрах мар тата вăтам йывăрлăхлă преступленисене тунăшăн айăпланисене пырса тивет. Наказанин хушма енĕ пулчĕ пулсан, вăл саккуна пăснă çынсенчен чылайăшне пырса тивет, вăл шутра йывăр преступленисене тăвакансене, сăмахран, çын вĕлерекенсене. Ирĕкрен хăтаракан вырăнсенчен тухнă хыççăн вĕсем ĕç тăвакан уголовлă инспекцине учета лекеççĕ. Кунта вара икĕ çул таранах учетра тăма пултараççĕ. Инспекторсем вĕсене асăрхаса тăраççĕ.

Саккунпа акă мĕнле палăртнă: ирĕклĕхе чакарасси наказанин тĕп енĕ пулчĕ пулсан, срока ĕç тăвакан уголовлă инспекцине учета илнĕ кунран шутлаççĕ; çак наказани хушма ен пулчĕ пулсан тата ирĕкрен хăтарассин пĕр тапхăрне унпа ылмаштарчĕç пулсан, наказани срокне юсану учрежденийĕсенчен ирĕке тухнă кунран пуçласа шутлаççĕ.

Енчен те ирĕклĕхе чакарнă çын пурăнакан вырăнĕнчен шута хумалла мар сăлтавсемпе хăй ирĕкĕпе тухса пĕр талăк ытла çухалса çӳресен, çак вăхăт наказани срокне кĕмест. Тата каласа хăвармалла, ирĕклĕхе чакарасси çар çыннисене, ют çĕршыв гражданĕсене, пурăнмалли яланхи вырăн çук çынсене пырса тивмест.

**– Айăпланисене асăрхаса тăрассине мĕнлерех йĕркелеççĕ?**

– Ирĕклĕхе чакарассипе айăпланисене асăрхаса тăрасси – вĕсем хăйсене мĕнле тытнинче, суд çирĕплетсе панă чарулăхсене пурнăçланине пăхса тăрассинче тата кирлĕ чух саккунпа палăртнă витĕм кӳмелли мелсемпе усă курассинче. Асăрхаса тăрассинче ĕç тăвакан уголовлă инспекцисем айăпланă çынсем тума пултаракан преступленисене асăрхаттарас тĕлĕшпе, Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртнă перечене шута хурса, тĕрлĕ аудиовизуаллă тата электронлă техника хатĕрĕсемпе усă кураççĕ. Кунсăр пуçне пирĕн инспекторсем талăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те (çĕрлехи вăхăтсăр пуçне) айăпланисене тĕрĕслеме килĕсене çитсе килме пултараççĕ. Наказание пурнăçлакана инспекцин калаçăва чĕнме те ирĕк пур.

**– Айăпланă çын наказание пурнăçлассин йĕркине пăсрĕ пулсан?**

– Çапла пулчĕ пулсан вара пĕрремĕш хутĕнче асăрхаттару паратпăр, иккĕмĕшĕнче – официаллă асăрхаттару, виççĕмĕшĕнче вара суд ăна ирĕкрен хăтарса юсану учрежденине яма çирĕплетет. Çавăн пекех çак ĕçре хавхалантару мелĕсене те пăхса хунă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăхшăн

# Тимлĕх пирки ан манăр

***Çулсем çинче йĕрке пулсан çеç вĕсем çинче хамăра кăшт лăпкăрах тытма пултаратпăр. Анчах та халĕ машинăсем те самаях йышлă, тепĕр чух тата килекен машинăн рулĕ умĕнче ӳсĕр водитель мар-ши тесе те шутлаттарать. Çуркуннехи çулĕ вара улталать.***

***Кăçалхи икĕ уйăх хыçа юлчĕ. Çак тапхăрта район территорийĕнчи çулсем çинче мĕнлерех йĕрке пулнăха? Ыйту тавра калаçма районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн уйрăмĕн пуçлăхне, милици майорне В.И. ВОЛКОВА редакци тĕпелне чĕнтĕмĕр.***

**– Владимир Ильич, иртнĕ икĕ уйăха мĕнлерех сăнласа пама пултаратăр?**

– Çак тапхăрта Муркаш районĕн территорийĕнчи çул-йĕр çинче 5 инкек пулчĕ. Вĕсенче пурĕ 1 çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ, 4-ăн аманчĕç. Вилнисемпе аманнисен хисепĕ пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан чакни курăнать, анчах лăплантармасть, паллах.

Мускав – Хусан çул çинче виçĕ авари пулса иртрĕ (сывлăх тĕлĕшĕпе инкек тӳсекенсем шăпах çавăнта ытларах та ĕнтĕ), вырăнти çулсем çинчи икĕ тĕслĕхре иккĕн аманнă.

**– Инкексен сăлтавĕсем çинче кăшт чарăнсан...**

– Водительсем руль умне ӳсĕрле ларни шутлаттарма пăрахмасть. Çак сăлтавпа икĕ уйăхра пурĕ 10 водителе тытса чарнă. Аварисем патне илсе çитерекен тепĕр сăлтав – машинăсем пысăк хăвăртлăхпа çӳрени. 241 водителе кун пирки асăрхаттарнă. Çуран çӳрекенсем ятарлă вырăнсенче çул урлă каçманни те ырри патнех илсе пыманнине манмалла мар.

**– Эсир çулсене тĕрĕслесе тăрас ĕçе те хутшăнатăр вĕт-ха?**

– Çапла. Пирĕн сотрудниксем асăннă тапхăрта тăватă çула тĕрĕслесе 14 предписани çырчĕç. Çулсем япăх пулни те вĕсем çинче инкек тухассине чакаракан паллă мар-çке. Çапла вара должноçри икĕ çынна административлă яваплăх тыттарма та тиврĕ.

Кунсăр пуçне, каламалла ĕнтĕ, эпир районти шалти ĕçсен пайĕ туса ирттерекен кашни мероприятиех хутшăнатпăр. Сăмахран, обществăлла йĕркешĕн тимлесе асăннă тапхăрта административлă йĕркене пăсакансем çине, çул-йĕр правилисене пăснисĕр пуçне, пурĕ15 протокол çыртăмăр.

**– Ачасемпе профилактика ĕçне ирттересси епле пырать?**

– Çулсем çинчи хăрушсăрлăхшăн тăрăшсах вĕрентӳ учрежденийĕсенче те тăтăшах калаçусем ирттеретпĕр. Акă январь–февраль уйăхĕсенче шкул ачисемпе 16 тĕл пулу йĕркеленĕ.

Çапах та çул-йĕр çинчи тимлĕх пирки тепĕр хут аса илтерни ытлашши мар пулĕ тетĕп. Çанталăк çак вăхăтра çулсене питĕ ултавлă тăвать: ăшăтать те, шăнтать те. Çавăнпа та пурне те асăрхануллă пулма сĕнес килет. Хамăрăн тимсĕрлĕхе пула хамăр кăна мар, ыттисем те инкеке лекме пултараççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Спорт хыпарĕсем

## Кубок – Муркаш çамрăкĕсенче

Мартăн 5-7-мĕшĕсенче Шупашкарта республикăри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсем хушшинче йĕлтĕр спорчĕн ăмăртăвĕ иртнĕ. Унта пирĕн районти спорт шкулĕн Ярапайкассинчи тата Калайкассинчи ( тренерĕсем – Э. Гордеев, В. Моисеев тата А. Дашкова) уйрăмĕсен воспитанникĕсем хутшăнса командăна 1-мĕш вырăна кăларма пултарнă, кубок çĕнсе илнĕ. Хутăш эстафетăра вара Муркашсем икĕ команда тăратнă. Пĕр команда çĕнтерӳçĕ пулса тăнă, иккĕмĕшĕ вара виççĕмĕш вырăна тухнă. Т. Иванова (1-мĕш вырăн), К. Иванова (3-мĕш), Д. Баранова (1-мĕш), С. Васильев (2-мĕш) тата А. Костина (2-мĕш) ăсталăхпа палăрнă.

## Акватлон ăмăртăвĕнче

Иртнĕ кунсенче Çĕнĕ Шупашкар хулинче акватлон енĕпе Пĕтĕм Раççейри ăмăрту иртнĕ. Унта ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн В. Герасимовăн воспитанникĕсем хутшăннă. Санкт-Петербург, Мускав, Чул хула тата ытти хуласенчи 1996-1997 çулсенче çуралнисен ӳсĕмĕнче (200 метр ишесси тата 1 км чупасси) Д. Даниловпа Е. Григорьев япăх мар ăмăртнă. Ăмăртăва А. Мастеровпа А. Иванов та хутшăннă.

## Биатлонистсем таврăннă

Чăваш енĕн паллă биатлонисчĕсем Евгений Петровпа Вячеслав Акимов çак кунсенче Тĕнче тата Европа ăмăртăвĕсене хутшăннă хыççăн киле таврăнчĕç. Евгений, Раççейăн пĕрлештернĕ командин капитанĕ, пилĕк медаль çĕнсе илнĕ. Пирĕн ентеш – Рыккакасси каччи Вячеслав та хăйне çак шайра тĕрĕслесе япăх мар ăмăртнă.

www.yandex.ru **Прогноз погоды с 13 по 19 марта**

| сб 13 | вс 14 | пн 15 | вт 16 | ср 17 | чт 18 | пт 19 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| облачно, небольшой снег | облачно, небольшой снег | переменная облачность | облачно, небольшой снег | облачно, небольшой снег | облачно, без существенных осадков | облачно |
| 0 | -1 | -7 | -6 | -7 | -11 | -10 |
| -5 | -7 | -11 | -10 | -14 | -25 | -15 |

## Тав тăватпăр

Муркаш ялĕнче пурăннă юратнă аннене, асаннене, хунямана, ĕçпе вăрçă ветеранне, тыл ĕçченне, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учительне, Федосия Артемьевна Григорьевана кăçалхи йывăр хĕл вăхăтĕнче юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн район администрацине, уйрăмах Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхне Николай Иванович Никитина тата районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçине Нина Пантелеевна Петрована, ветерансен районти канашне, Муркашри вăтам шкул коллективне, ял-йыша, тăвансемпе кӳршĕсене чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Григорьевсен çемйи.**

Муркаш ял тăрăхне кĕрекен Çурлатри ялĕнче пурăннă ĕç ветеранне, тыл ĕçченне, аннене, кукамая, хунямана, Нина Федоровна Николаевана юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн ял-йыша, кӳршĕсене, тăвансене чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Кузнецовсен, Дмитриевсен çемйисем.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

**ООО «Виктория»**
*Режим работы: с 10-ти до 17-ти в рабочие дни.*
*- Оценка имущества, в том числе земельных участков – содействие.*
*- Составление налоговых деклараций и передача по Интернету в ИФНС, ПФ.*
*- Оформление документов для получения имущественных, социальных налоговых вычетов.*
*- Восстановление и постановка бухгалтерского, кадрового учета.*
*- Помощь в регистрации, реорганизации, ликвидации организаций, ИП.*
*- Бизнес-консультации, полное сопровождение бизнеса.*
*Адрес: ЧР, с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119;*
*Тел.: (83541) 62-4-43; (8352) 22-10-60; моб.: 446-448.* 3-9.

Выдаем заём под материнский капитал. Тел: 68-83-33, 8-927-995-03-41. 4-4.

выдаем на выгодных условиях ЗАЙМЫ
принимаем СБЕРЕЖЕНИЯ под достойные проценты
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.
КПКГ “КАПИТАЛ” работаем с пайщиками

Продается телка осемененная. Тел.: 8-927-992-32-89.

Продаю гравмассу, песок речной, доставка от 8 т до 25 т за рейс. Тел.: 8-917-65-00-385, 8-960-301-61-49. 2-5.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 2-8.

Рытье колодцев. Продажа колец (пропаренные) заводские. Тел.: 8-903-379-09-01. 4-6.

Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 9-38.

Блоки керамзитобетонные. Дешево. Тел.: 8-903-358-77-72. 6-8.

Кольца колодезные. Цена 1700 руб. Доставка. Бурение колодцев. Тел.: 8-906-382-89-14. 3-5.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.

Продаем керамзитобетонные блоки от 26 руб. Весенние скидки. «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 4-5.

Продается комната по адресу: с. Моргауши, ул. Красная площадь, д. 6. Цена договорная. Тел. для справок: 8-903-476-56-64.

Продаю комнату 18,1 кв. м. в трехкомнатной квартире в центре с. Моргауши по ул. Ленина, д. 32 на первом этаже, рядом с «Чувашсетьгаз», окна и балкон на улицу. Бойкое доходное место для магазина, удобное для офиса, уютное для проживания. Тел.: 8-831-2-40-40-76.

Продаю однокомнатную квартиру в кирпичном доме по ул. Парковая, площадью 33 кв. м., в рассрочку. Тел.: 8-909-301-68-10.

Дорого покупаем металлолом. Тел.: 8-905-341-53-11, 8-903-063-53-04.

Продаю бычок, возраст 1 год. Тел.: 62-3-77.

Продаем керамзитобетонные блоки 20х20х40, пропаренные, сертифицировано. Организация доставки. Тел.: 8(8352)38-58-14, 8-927-668-58-14. 1-2.

Куплю картофель и бычки. Продажа масел фильтров, запчастей для иномарок в с. Моргауши, «Сельхозтехника». Тел.: 8-960-311-23-87.

Продаю для трактора: косилки, плуги, грабли, копалку, сажалку, БДТ-3, окучник, лущильник; грабли для мотоблока, протравитель семян ПСШ5(3), комплект решеток для сортировки семян «Петкус». Тел.: 8-905-341-45-24.

**19 марта с 8-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика производит продажу обуви из натуральной кожи производства Ульяновской, Казанской и других фабрик (зима – весна).**

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru.

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 12.03.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.